ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН НАЛУКСЕМПЕ ТӲЛЕВСЕМ ҪИНЧЕН КАЛАКАН САККУНЁСЕМПЕ РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙЁН СУБЪЕКЧЁСЕНЕ ШАНСА ПАНĂ НАЛУК ЙЕРКЕЛЕВЁН ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ЫЙТĂВЁСЕМ ҪИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЁРТЕССИ ҪИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Раҫҫей Федерацийён налуксемпе тӳлевсем çинчен калакан саккунĕсемпе Раҫҫей Федерацийён субъекчĕсене шанса панă налук йĕркелĕвĕн Чăваш Республикинчи ыйтăвĕсем çинчен" 2001 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 38 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоҫĕсем, 2001, 42, 45 №-сем; 2002, 46, 49, 52 №-сем; 2003, 54, 57 №-сем; 2004, 59, 61 №-сем; 2005, 64, 65 №-сем; 2006, 72 №; 2007, 73, 74 №-сем; 2008, 76 №; 2009, 80, 82 №-сем; 2010, 87 №; 2011, 90, 91 №-сем; 2012, 96 №; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 3, 10 №-сем; 2014, 9, 11 №-сем; 2015, 6, 10 №-сем; 2016, 6, 11 №-сем; 2017, 11 №; "Республика" хаçат, 2018, нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕ, авăн уйăхĕн 19-мĕшĕ; 2019, нарăс уйăхĕн 20-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 18-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2020, çу уйăхĕн 7-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ; 2021, çу

уйăхĕн 26-мĕшĕ, чӳк уйăхĕн 17-мĕшĕ; 2022, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 28-мĕшĕ; 2023, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 33 статьяра:

а) çакăн пек çырса тăххăрмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"Федерацин "Ветерансем çинчен" 1995 çулхи кăрлач уйăхĕн 12-мĕшĕнчи 5-ФЗ №-лĕ саккунĕн 3 статйин 1-мĕш пунктĕнче кăтартнă çар çапăçăвĕсен ветеранĕсем налука çак Саккунăн 36 статйипе 150 лаша вăйĕ таран (110,33 кВт таран) (150 лаша вăйне (110,33 кВт) кĕртсе) двигатель хăвачĕллĕ çăмăл автомобильсем тĕлĕшпе палăртнă налук ставкин 50 проценчĕпе танлашакан виçепе тӳлеççĕ.";

ă) тăххăрмĕш абзаца вуннăмĕш абзац тесе шутлас тата унта пĕрремĕш предложенине çакăн пек çырса хурас: "Çак статьяра кăтартнă, икĕ тата ытларах транспорт хатĕрне регистрациленĕ налук тӳлекенсемшĕн – физически сăпатсемшĕн налук çăмăллăхне хăйсем суйласа илнĕ тăрăх пĕр транспорт хатĕрĕ тĕлĕшпе налук çăмăллăхне парасси çинчен калакан заявленипе килĕшӳллĕн параççĕ.";

б) вуннăмĕш тата вун пĕрмĕш абзацсене тивĕçлĕн вун пĕрмĕш тата вун иккĕмĕш абзацсем тесе шутлас;

2) 39.1 статьян 1.3-мĕш пункчĕн тăваттăмĕш абзацĕнче "2023 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕчченхи" сăмахсене "2026 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕчченхи" сăмахсемпе улăштарас;

3) 47.1 статьяра:

а) 1–5-мĕш пунктсене çакăн пек çырса хурас:

"1. Инвестици тунăшăн налука чакарнипе (малалла – налука чакарни) усă курма Чăваш Республикин территорийĕнче регистрациленĕ организацисем, çавăн пекех Чăваш Республикин тулашĕнче регистрациленĕ организацисем хăйсен Чăваш Республикин территорийĕнче уйрăм ĕçлекен подразделенийĕсем (малалла – налук тӳлекен) тĕлĕшпе пултараççĕ:

1) налук тӳлекенĕн Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 286[1] статйин 2-мĕш пункчĕн 1-мĕш тата 2-мĕш çум пункчĕсемпе пăхса хăварнă, Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă тĕп хатĕрсен объекчĕсемпе усă курнипе пулакан тăкакĕсем тĕлĕшпе, асăннă объектсем ăна пырса тивекен налук тӳлекен вырнаçнă вырăна шута илсе;

2) налук тӳлекенĕн Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 286[1] статйин 2-мĕш пункчĕн 3-мĕш çум пункчĕпе пăхса хăварнă, Чăваш Республи-

кин территорийĕнче вырнаçнă çак сăпатсене укçа-тенкĕне хăй ирĕкĕпе куçарса панипе пулакан тăкакĕсем тĕлĕшпе:

а) клуб йышши патшалăх тата муниципаллă учрежденисене (клубсене, культура керменĕсемпе çурчĕсене, халăх пултарулăхĕн çурчĕсене);

ă) патшалăх тата муниципаллă музейсене;

б) патшалăх тата муниципаллă библиотекăсене;

в) исполнитель искусстви енĕпе ĕçлекен патшалăх тата муниципаллă организацисене (театр, концерт организацийĕсене, оркестрсене);

3) налук тӳлекенĕн Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 286[1] статйин 2-мĕш пункчĕн 9-мĕш çум пункчĕпе пăхса хăварнă, Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă вĕренӳ организацийĕсене тавăрми панă куçакан тата куçман пурлăх хакĕ (укçа-тенке кĕртсе) евĕр пулакан тăкакĕсем тĕлĕшпе, патшалăх аккредитацине илнĕ пĕтĕмĕшле пĕлӳ памалли çак тĕп вĕренӳ программисене пурнăçлаканскерсене:

а) пĕтĕмĕшле пĕлӳ памалли тĕп вĕренӳ программисене – пĕтĕмĕшле пуçламăш пĕлӳ памалли вĕренӳ программисене, пĕтĕмĕшле тĕп пĕлӳ памалли вĕренӳ программисене тата пĕтĕмĕшле вăтам пĕлӳ памалли вĕренӳ программисене;

ă) професси енĕпе вăтам пĕлӳ памалли вĕренӳ программисене – квалификациллĕ рабочисене, служащисене вĕрентсе хатĕрлемелли программăсене, вăтам сыпăкри специалистсене вĕрентсе хатĕрлемелли программăсене.

2. Иртсе пыракан налук (отчет) тапхăрĕнче налука чакарнин виçи пĕтĕмĕшле илсен çак хисеппе танлашать:

1) Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 257 статйин 1-мĕш пункчĕн иккĕмĕш абзацĕпе килĕшӳллĕн тĕп хатĕрĕн чи малтанхи хакĕпе танлашакан тăкаксен суммин 50 процентĕнчен ытла мар;

2) Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 257 статйин 2-мĕш пунктĕнче кăтартнă тĕп хатĕрĕн чи малтанхи хакĕн улшăннă виçипе танлашакан тăкаксен суммин 50 процентĕнчен ытла мар (тĕп хатĕрĕн пĕр пайне пĕтерсе хунисĕр пуçне);

3) çак статьян 1-мĕш пункчĕн 2-мĕш çум пунктĕнче кăтартнă Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă патшалăх учрежденийĕсемпе муниципаллă учрежденисене укçа-тенкĕне хăй ирĕкĕпе куçарса паракан укçа евĕр куçарса панипе пулнă тăкаксене саплаштарас тĕллевпе:

тăкаксен суммин 50 процентне, хăй ирĕкĕпе куçарса панă укçа-тенкĕ сумми 100 пин тенкĕрен пуçласа 1 миллион тенкĕ таран (1 миллион тенкĕ чухлĕ) пулнă чухне;

тăкаксен суммин 70 процентне, хăй ирĕкĕпе куçарса панă укçа-тенкĕ сумми 1 миллион тенкĕрен пуçласа 5 миллион тенкĕ таран (5 миллион тенкĕ чухлĕ) пулнă чухне;

тăкаксен суммин 90 процентне, хăй ирĕкĕпе куçарса панă укçа-тенкĕ сумми 5 миллион тенкĕрен пуçласа 10 миллион тенкĕ таран (10 миллион тенкĕ чухлĕ) пулнă чухне.

Асăннă организацисене панă пурлăхăн чи пĕчĕк (чи пысăк) хакĕ çулталăкне 10 миллион тенкĕрен ытла пулма пултараймасть;

4) çак статьян 1-мĕш пункчĕн 3-мĕш çум пунктĕнче кăтартнă вĕренӳ организацийĕсене куçакан пурлăха тата куçман пурлăха (укçа-тенке кĕртсе) тӳлевсĕр панă чухне:

пурлăх хакĕ (укçа-тенке кĕртсе) евĕр пулакан тăкаксен суммин 50 процентне, куçарса панă пурлăх хакĕ 1 миллион тенкĕрен пуçласа 10 миллион тенкĕ таран (10 миллион тенкĕ чухлĕ) пулнă чухне;

пурлăх хакĕ (укçа-тенке кĕртсе) евĕр пулакан тăкаксен суммин 70 процентне, куçарса панă пурлăх хакĕ 10 миллион тенкĕрен пуçласа 25 миллион тенкĕ таран (25 миллион тенкĕ чухлĕ) пулнă чухне;

пурлăх хакĕ (укçа-тенке кĕртсе) евĕр пулакан тăкаксен суммин 90 процентне, куçарса панă пурлăх хакĕ 25 миллион тенкĕрен пуçласа 50 миллион тенкĕ таран (50 миллион тенкĕ чухлĕ) пулнă чухне.

Асăннă вĕренӳ организацийĕсене панă пурлăхăн чи пĕчĕк (чи пысăк) хакĕ çулталăкне 50 миллион тенкĕрен ытла пулма пултараймасть.

3. Организацисен тупăшĕнчен илекен налук ставкин налука чакарнин чи пĕчĕк (чи пысăк) виçине палăртмалли виçе çак хисеппе танлашать:

8,5 процент – çак статьян 1-мĕш пункчĕн 1-мĕш çум пунктĕнче кăтартнă налук тӳлекенсен тăкакĕсем тĕлĕшпе;

5,0 процент – çак статьян 1-мĕш пункчĕн 2-мĕш тата 3-мĕш çум пункчĕсенче кăтартнă налук тӳлекенсен тăкакĕсем тĕлĕшпе.

4. Çак статьян 1-мĕш пункчĕн 1-мĕш çум пункчĕпе пăхса хăварнă налука чакарнипе усă курма Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче инвестици ĕç-хĕлне патшалăх пулăшасси çинчен" 2004 çулхи çу уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 8 №-лĕ саккунĕн 6^1 статйинче кăтартнă налук тӳлекенсене, организацисен тупăшĕ тĕлĕшпе пĕчĕкрех налук ставкипе усă куракан организацисемсĕр

пуçне, çак Саккунăн 47 статйипе çавнашкал налук ставки палăртнă тĕп хатĕрсен халиччен усă курман (ĕçе кĕмен), Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕпе е Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ инвестицисем явăçтарма условисем йĕркелес тĕлĕшпе патшалăх политикине туса хатĕрлеме тата пурнăçлама полномочи панă Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕпе налук тӳлекен хушшинче тунă инвестици килĕшĕвне пурнăçланă шайра туса лартнă (туяннă) объекчĕсем тĕлĕшпе, налук тӳлекен Инвестици политики енĕпе ĕçлекен канаш ырланă инвестици проектне тăратнă чухне, 50 миллион ытла тенкĕлĕх ирĕк параççĕ. Инвестици килĕшĕвне налук тӳлекен хăйне учета илнĕ налук органне организацисен тупăшĕнчен илекен налук енĕпе налук декларацине (организацисен тупăшĕнчен илекен налук тăрăх аванс тӳлевĕсем енĕпе налук шутлавĕсене) Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕпе пама палăртнă вăхăтра тăратать.

5. Налук тӳлекен иртсе пыракан налук (отчет) тапхăрĕнче Чăваш Республикин республика бюджетне тӳлемелли налук суммине (аванс тӳлевне) иртсе пыракан налук (отчет) тапхăрĕнче налука чакарнин (налука чакарнин пайĕ) хисепĕ чухлĕ, çавăн пекех иртнĕ налук (отчет) тапхăрĕсенче налука чакармалли майпа усă курман сумма чухлĕ (ăна Раççей Федерацийĕн Налук кодексĕн 286[1] статйин 9-мĕш пункчĕн положенийĕсене шута илсе палăртаççĕ) чакарма пултарать, анчах та налука чакарнин чи пĕчĕк (чи пысăк) виçин сумминчен ытла мар.

Иртсе пыракан налук (отчет) тапхăрĕнче налука чакарни налука чакарнин (усă курман налука чакарнин) чи пĕчĕк (чи пысăк) виçинчен иртекен пайра унпа Чăваш Республикин республика бюджетне тӳлемелли налук суммине (аванс тӳлевне) пиллĕкрен ытла мар налук (отчет) тапхăрĕ шайĕнче, налук тӳлекен налука чакармалли правăпа усă курнă налук тапхăрне кĕртсе, чакарма усă курма пултараççĕ.";

ă) 6-мĕш пункта "налука чакарнипе" сăмахсем умĕн ", çак статьян 1-мĕш пункчĕн 1-мĕш çум пункчĕпе пăхса хăварнă" сăмахсем хушса хурас.

2 статья

1. Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа пĕр уйăх иртиччен маларах мар вăя кĕрет тата 2024 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçланнă право хутшăнăвĕсене пырса тивет.

2. Чăваш Республикин "Раççей Федерацийĕн налуксемпе тӳлевсем çинчен калакан саккунĕсемпе Раççей Федерацийĕн субъекчĕсене шанса панă налук йĕркелĕвĕн Чăваш Республикинчи ыйтăвĕсем çинчен" 2001 çулхи утă уйăхĕн 23-мĕшĕнчи 38 №-лĕ саккунĕн (çак Саккунпа улшăнусем кĕртнĕ) 33 статйин тăххăрмĕш абзацĕн положенийĕн вăйĕ транспорт налукне 2023 çулхи налук тапхăрĕшĕн шутласа палăртассипе çыхăннă право хутшăнăвĕсене пырса тивет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи раштав уйахĕн 21-мĕшĕ
100 №